26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
13
ШАМАТКУН
225(6462) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Чӑваш АССР 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VI-мӗш Сессийӗ

Чӑваш АССР-ӗн 1943 ҫулхи бюджетне 9 уйӑх хушшинче мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен

(Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗн председателӗ К. Д. Медянин депутат тунӑ содокладран)

Депутат юлташсем!

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ сире Чӑваш республикин 1943 ҫулхи бюджетне 9 уйӑх хушшинче мӗнле пурнӑҫа кӗртни ҫинчен калакан отчета пӑхса тухса ҫирӗплетме тӑратрӗ. Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗ, ку отчета тӗплӗн пӑхса тухса, Совнарком тупӑшсен ҫӑлкуҫӗсене тӗрӗс шута илнӗ тата расходсене Отечественнӑй вӑрҫӑ условийӗсене май расходлама тӗрӗс палӑртса хунӑ тесе шутлать.

Анчах Бюджет Комиссийӗ Чӑваш республикин 1943 ҫулхи бюджетне виҫӗ квартал хушшинче ҫителӗксӗр пурнӑҫланӑ тесе палӑртать — тупӑшсем енӗпе 70,4 процент, расходсем енӗпе — 61,5 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. 9 уйӑх хушшинче бюджета пӗтӗмпе 6.912,4 пин тенкӗ сахалтарах укҫа панӑ. Ӗҫ ҫакӑн пек пулнине, паллах ӗнтӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тӳсме ҫук.

Чӑваш АССР Наркомфинӗ отчет туса хатӗрленӗ чухне бюджетӑн тупӑшсен пайне союзнӑй бюджета памалли укҫа-тенке те (республика бюджечӗ кӑҫалхи октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне союзнӑй бюджета мӗн чухлӗ пама тивӗҫлине) кӗртнӗ. Бюджет Комиссийӗ Наркомфин отчетне тӳрлетрӗ. Ҫавӑн пекех хӑшпӗр районсем те хӑйсен бюджечӗсен тупӑшсен пайне союзнӑй бюджета памалли укҫа-тенке кӗртнӗ, ҫавна пула вӗсем хӑйсен бюджечӗн тупӑш пайӗ ытлашшипех пурнӑҫланӑ тесе йӑнӑш шутланӑ. Канаш районӗ, сӑмахран, тупӑшсем енӗпе плана 113,7 процент тултарнӑ тесе пурӑннӑ, тӗрӗссине илсен, бюджета пурнӑҫланинчен парӑмсене кӑларса парахсан, плана 73,7 процент ҫеҫ тултарни курӑнать. Шӑхасанпа Вӑрмар районӗсемпе те ӗҫсем ҫакнашкалах.

Бюджет Комиссийӗ, ҫакӑн ҫинчен Сессие пӗлтерсе, малашне ҫакӑн пек тума юраманни ҫинчен Наркомфина ҫирӗппӗн кӑтартса памалла тесе шутлать.

Наркомфин дисциплинӑсӑр пулни РСФСР Наркомфинне бюджета кая юлса тӑратнине те палӑрчӗ. Материала октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне ҫитерсе памалла пулнӑ, ӑна октябрӗн 26-мӗшӗнче анчах ҫитерсе панӑ.

Наркомфин расход тумалли расписанисене кредита валеҫсе паракансене уйӑх пуҫланиччен 10 кун маларах пӗлтерме тивӗҫлӗ. Тӗрӗссипе, кредит парасси ҫинчен калакан расписанисене 22 кунран пуҫласа 40 кун таран кая юлса ҫитерессӗ. Ҫапла, июлӗн 6-мӗшӗнче Наркомпроса 400 пин тенкӗ укҫа куҫарса панӑ, анчах ӑна мӗнле тӗллевсемпе расходламалли ҫинчен июлӗн 28-мӗшӗнче кӑна кӑтартса панӑ. Ҫав укҫа 22 кун хушши усӑ курмасӑрах выртнӑ.

Бюджет комиссийӗ ҫавӑн пекех ҫакна та палӑртрӗ: уйрӑм тӳлевсем тӑрӑх пырса кӗнӗ тупӑшсене 1943 ҫулхи бюджета пӗтӗмӗшпех кӗртмен. Сӑмахран, колхозсемпе ӗҫсыннисенчен илмелли подоходлӑй налога шута илсе пӗтереймен.

Главмясо, сӑранпа атӑ-пушмак тата пир-авӑр промышленноҫӗсен системинчи предприятисем, Хатӗрлев наркомачӗн системи, ҫавӑн пекех Хӗрлӗ Чутай, Пӑрачкав, Шӑмӑршӑ районӗсем 1943 ҫулхи виҫӗ квартал хушшинче тӑтӑшах бюджет умӗнчи хӑйсен обязательствисене пурнӑҫламасӑр пурӑнчӗҫ.

Калас пулать, Чӑваш АССР Верховный Совечӗн депутачӗсем бюджет ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе иртнӗ сессисенче кӑтартса панисенчен чылайӑшне райсовет исполкомӗсем начар пурнӑҫласа пынӑ, ҫавӑнпа та халӗ вӗсем ҫинчен тепӗр хут калас пулать. Ялсенчи тата районсенчи бюджетсене вӑхӑтра тумаҫҫӗ тата вӗсене начар пахалӑхпа тӑваҫҫӗ. Елчӗк районӗн бюджетӗнче тупӑшсен пайне чакарнӑ, расходсен пайне вара ӳстернӗ пулнӑ. Ҫавна пула социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисем валли укҫа-тенкӗ парас ӗҫе чӑрмантарнӑ, учительсене ӗҫ укҫи памалли правительство ҫирӗплетсе панӑ срокрсене пӑснӑ, медицина работникӗсене те ӗҫ укҫи кая юлса панӑ. Наркомфин ҫакӑн ҫинчен 8 уйӑх хушши пӗлмесӗр пурӑннӑ. Чылай районсенче — Хӗрлӗ Чутай, Кувакино, Пӑрачкав, Ҫӗмӗрле тата ытти районсенче бюджет ҫителӗксӗр пурнӑҫланса пырать. Ҫакӑ вӑл бюджет ӗҫӗ начар пулнине, Наркомфин бюджет мӗнле пурнӑҫа кӗнине ҫителӗксӗр контроллесе тӑнине тепӗр хут ҫирӗплетсе парать.

Чӑваш республикин 1943 ҫулхи бюджетне 9 уйӑх хушшинче расходсем енӗпе те ҫителӗксӗр пурнӑҫланӑ. Пӗр наркомат та, пӗр район та хӑйсене панӑ укҫа-тенкӗпе пӗтӗмӗшпех усӑ курайман. Бюджетӑн расход пайне уйрӑмах Тӑвай, Ҫӗмӗрле, Вӑрнар районӗсенче тата Улатӑр, Канаш, Шупашкар хулисенче начар пурнӑҫа кӗртнӗ.

Наркомфин бюджетӑн расход пайне пӗтӗмпе те 28,7 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Пуранмалли ҫуртсем ҫителӗксӗр пулин те, Наркомхоз хуласенче пурӑнмалли ҫуртсем тума уйӑрса панӑ укҫапа питех те ҫителӗксӗр усӑ курать. Шупашкарпа Канаш хулисенче прачечнӑйсем тума тата 8 районра мунчасем тума 387.8 пин тенкӗ укҫа панӑ, вӑл [illegible] 9 уйӑх хушшинче мӗн пурӗ те 1.500 тенкипе ҫеҫ (проектсем тунӑ ҫӗрте) усӑ курнӑ. Хуласенчи электростанцисене выранти топливо ҫине куҫарнашкӑн Наркомхозӑн 1.760 пин тенкӗ укҫа пур, вӑл пӗтӗмпе те 64,7 пин тенкипе ҫеҫ усӑ курнӑ.

Наркомздрав та бюджета ҫителӗксӗр пурнӑҫласа пырать. Ҫавна пула ӗнтӗ ҫӗнӗ мероприятисем тӑвасси, кадрсем хатӗрлесси, больницӑра выртса сывалмалли коечӗсен хисепне ӳстересси, сыватакан учрежденисен ҫуртӗсене юсасси, хӗле хатӗрленесси, ӗҫсыннисене пирвайхи пулӑшу парасси пачах ҫителӗксӗр пурнӑҫа кӗрсе пынӑ. Трахома чирӗнчен сыватас ӗҫ валли панӑ укҫа-тенкӗпе те начар усӑ кураҫҫӗ. Сывлӑха сыхлас ӗҫ Халӑх Комиссарӗн Лихачев юлташӑн, ҫак кӑтартусене шута илсе, республикӑри медицина учрежденийӗсене ертсе пырас ӗҫе тӗпренех лайӑхлатас пулать.

Бюджет Комиссийӗ бюджета пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе Наркомпроса ҫителӗксӗр ӗҫлет тесе шутлать. 9 уйӑх хушшинче вӑл шкулсем ҫумӗнче интернатсем организацилеме, Культура ҫурчӗсем тума, вулав ҫурчӗсем валли, шкулсем юсама, ачасене ҫӳрава илме тата ытти хӑшпӗр мероприятисене тума панӑ укҫапа усӑ курман. Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗн Макаров юлташӑн укҫа-тенкӗ мӗнле расходланине контроллесе тӑрас пулать, панӑ укҫапа пӗтӗмӗшпе усӑ курмалла тӑвас пулать.

Отечественнӑй вӑрҫӑ социаллӑ обеспечени наркомачӗ умне пысӑк требованисем кӑларса тӑратрӗ. Бюджет тӑрӑх наркомата Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене ҫӗнӗ ӗҫсене вӗрентме тата пулӑшма, инвалидсен ҫурчӗсене организацилеме, [illegible] сем тӑвакан мастерскойсем [illegible] тума тата ытти мероприятисем валли укҫа-тенкӗ чылай панӑ. Апла пулин те ҫак укҫан пысӑк пайӗпе ку таранччен усӑ курман. Инвалидсене материаллӑ пулӑшу памашкӑн панӑ укҫа-тенкӗ те чылай усӑ курмасӑр юлнӑ.

Депутат юлташсем! Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VI-мӗш Сессийӗ Финанс Халӑх Комиссариатӗнчен, район совечӗсен исполкомӗсенчен бюджет ӗҫӗн пур звенисене те тӗппӗрен лайӑхлатма, финанспа бюджет дисциплинине ҫирӗппӗн пӑхӑнса пыма, халӑхран укҫа-тенкӗ пухмалли, государство тупӑшӗсене пухмалли плансене тӑтӑшах пурнӑҫласа пыма, паракан укҫапа пӗтӗмӗшпех усӑ курма ыйтма тивӗҫлӗ.

Хамӑрӑн мӗнпур вӑйпа укҫа-тенкӗсене пирӗн государствӑн вӑй-хӑватне тӗреклетме, тӑван Хӗрлӗ Ҫара пулӑшма, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хӑвӑртрах ҫапса аркатма парар!

Пурне те обязательнӑй йӗркепе хут вӗрентмелли закона ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пырар

(Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ М. П. Макаров юлташ тунӑ докладран)

Депутат юлташсем!

Пирӗн ҫӗршывра пурне те обязательнӑй йӗркепе пуҫламӗш шкулта хут вӗрентесси ҫинчен калакан закона йышӑннӑранпа 13 ҫул иртрӗ. Пирӗн социализмлӑ аслӑ ҫӗршыври темиҫе вунӑ миллион ача, ҫав вӑхӑт хушшинче пуҫламӗш шкулсенчен вӗренсе тухса, малалла — вӑтам тата аслӑ шкулсене вӗренме кайма, аслӑлӑха алла илсе тӗрлӗ специалистсем пулма ҫул тупрӗҫ.

Ачасене пурне те обязательнӑй йӗркепе хут вӗрентесси пирӗн ҫӗршывра пӗтӗм халӑх туса пыракан государство ӗҫӗ пулса тӑрать. Партипе правительство ачасене вӗрентсе ҫитӗнтерессишӗн ҫав тери тимлӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Капитализм пусмӑрӗнчен хӑтарнӑ пирӗн чӑваш халӑхӗ, тӑван ҫӗршыври ытти мӗнпур халӑхсем пекех, культура, пӗлӳлӗх патнелле пӗтӗм чун-чӗрипе туртӑнса ӳсрӗ. Патша саманинче культура тӗлӗшпе темиҫе ӗмӗр хушши кая юлнине пирӗн халӑхӑн кӗске вӑхӑтрах пӗтермелле пулчӗ. Совет влаҫӗн ҫулӗсенче пирӗн республикӑра шкулсен хисепӗ, вӗсенче вӗренекенсен йышӗ ҫулран ҫул ӳссе пычӗ, государство пурне те обязательнӑй йӗркепе хут вӗрентмелли закона пурнӑҫланӑ ҫӗре укҫа-тенкӗ ҫулран ҫул нумайрах хывса пычӗ.

1913—14-мӗш вӗренӳ ҫулӗнче Чӑваш ҫӗршывӗн территорийӗ ҫинче пӗтӗмпе те 463 шкул, вӗсенче вӗренекенсен йышӗ 29.786 ҫын кӑна пулнӑ пулсан (ку шута техникумсем тата кадрсем хатӗрлекен ытти тӗрлӗ вӗренӳ заведенийӗсем те кӗреҫҫӗ), кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче вара пирӗн республикӑра Наркомпрос системинче кӑна пуҫламӗш шкулсем — 556, туллимар вӑтам шкулсем — 348, вӑтам шкулсем — 123 ӗҫлеҫҫӗ, вӗсенче кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче 157.813 ҫын вӗренет. Ку шута Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗн системинчи шкулсем тата ытти тӗрлӗ ведомствасен кадрсем хатӗрлемелли шкулӗсем кӗмеҫҫӗ.

1930—31-мӗш вӗренӳ ҫулӗнче, пурне те обязательнӑй йӗркепе пуҫламӗш шкулта вӗрентме тытӑннӑ ҫул, Чӑваш республикинчи шкулсенче 96.500 ҫын вӗреннӗ, халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе ун чухне 10.395.200 тенкӗ хывнӑ. 1943—44-мӗш вӗренӳ ҫулӗнче вара, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, пурне те обязательнӑй йӗркепе хут вӗрентес ӗҫ валли государство 44 920.000 тенкӗ панӑ.

Ҫак тӗслӗхсем ӗнтӗ пирӗн партипе правительство, пӗтӗм совет халӑхӗ ачасене вӗрентсе ҫитӗнтерессишӗн ҫине тӑрса тӑрӑшнине питех те уҫӑмлӑн кӑтартса параҫҫӗ, ҫав тӗслӗхсене патша правительстви шкулсене тытма панӑ мӗскӗн «пулӑшупа» нимпе те танлаштарма ҫук.

Пурне те обязательнӑй йӗркепе хут вӗрентессине пурнӑҫа кӗртес ӗҫре республикӑри ачасен хисепне тӗрӗс шута илесси тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать.

Юлашки 3—4 ҫул хушшинче пӗрремӗш класа вӗренме илме тивӗҫлӗ ачасен хисепне официальнӑй йӗркепе шута илсе пыман. 1-мӗш класа мӗн чухлӗ ача вӗренме илессине ачасем ҫурални ҫинчен статистика паракан даннӑйсем тӑрӑх палӑртса пынӑ, аслӑрах классенче вара ачасен хисепне ҫулсерен класран класа куҫса пынӑ тӑрӑх шута илсе пынӑ. Ҫавна пула ачасен хисепне тӗрӗссипе пулнинчен яланах ытларах шутланӑ.

РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1943 ҫулхи июлӗн 14-мӗшӗнче «8 ҫултан пуҫласа 15 ҫула ҫитичченхи ачасемпе подростоксене шута илес ӗҫе организацилесси тата пурне те обязательнӑй йӗркепе хут вӗрентмелли закон мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине тӗрӗслесси ҫинчен» постановлени йышӑнчӗ, вырӑнти совесене чи малтан ачасене тӗрӗс шута илме, унтан вара всеобуч законӗ мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине кулленех тӗрӗслесе тӑма хушрӗ.

Ачасене ҫав йӗрке тӑрӑх шута илес ӗҫе государствӑн пысӑк ӗҫӗ вырӑнне хурса туса ирттермелле. Анчах ӗҫсынни депутачӗсен хӑшпӗр вырӑнти совечӗсем ҫак ӗҫ ҫине кирлӗ пек ҫаваранса пӑхмарӗҫ, вӗсем ҫак ӗҫе пӗтӗмӗшпех шкулсемпе ҫутӗҫ органӗсем ҫине тӳнтерчӗҫ, общественноҫа анлӑн мобилизацилемерӗҫ.

Ҫакна ӑна ӗҫсынни депутачӗсен Куславкка, Калинино, Пӑрачкав тата Шупашкар райсовет исполкомӗсем пирки каламалла.

Асӑннӑ райисполкомсем ачасене шута илес ӗҫ ҫине сӳрӗк пӑхнине пула, ачасен пӗр пайне шута илмен, шкула миҫе ача ҫӳреме тивӗҫлине вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ тӗле палӑртса хуман. Сӑмахран, Шупашкар районӗнчи Карачура ялсовечӗ ачасене шута илни ҫинчен шкула пӑтраштарса пӗтернӗ материалсем панӑ, хӑшпӗр ачасене списока икӗ хут кӗртнӗ, ҫав вӑхӑтрах 22 ачана пачах кӗртмесӗр хӑварнӑ. Кун пекки малашне пулмалла мар.

Уйрӑмӑн илсен, ачасене Комсомольски, Елчӗк, Хӗрлӗ Чутай районӗсенче чылай аван шута илсе тухнӑ.

Республика тӑрӑх шута илсе тухнӑ хыҫҫӑн пирӗн 8—15 ҫулсенчи ачасем пӗтӗмпе 153.218 ача пурри палӑрчӗ. Вӗсенчен 1-мӗшпе 4-мӗш классенче — 101.378 ача, 5-мӗшпе 7-мӗш классенче — 51.840 ача вӗренме тивӗҫлӗ.

Ялти вырӑнсенче ачасене пурне те пуҫламӗш шкула, хуласенче пурне те 7 ҫул вӗренмелли шкула явӑҫтарас тесен, шкулсене тӗрӗс вырнаҫтарса тухни кирлӗ. Пирӗн республикӑра шкулсем чылаях йӑвӑ лараҫҫӗ. Шкулсене тунӑ чухне яланах ачасене пурне те ҫӗр процентпех вӗренӗве явӑҫтарма кирлине, шкулсене мӗнле те пулин ачасем патнерех илсе пыма кирлине шута илнӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех чылай районсем ҫырма-ҫатраллӑ пулнине тата вӑрмансем пур ҫӗрте те пӗр пек маррине шута илнӗ. Вӑрманлӑ вырӑнсенче ялсем сайра пирки кашни ялта тенӗ пекех пӗчӗк шкулсем те пулин тума лекет. Ҫавӑнпа та пӗчӗк шкулсене сыхласа хӑвармалла кӑна мар, вӗсене ҫӗнӗрен те организацилемелле пулать.

1943—44-мӗш вӗренӳ ҫулӗ валли халӑх хуҫалӑх планӗ тӑрӑх пирӗн пуҫламӗш шкулсем — 556, туллимар вӑтам шкулсем — 348, вӑтам шкулсем — 123 пулмалла. Кунсӑр пуҫне пирӗн хӑлхасӑр ачасем валли икӗ шкул, суккӑр ачасем валли — пӗр шкул пур. Пӗтӗмпе вара—1.030 шкул.

1943 ҫулта, вӑрҫӑ вӑхӑтне пӑхмасӑрах, Чӑваш АССР Совнаркомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, шкул пур вырӑнтан 3 километр е унтан та аякарах ларакан ялсенче, пуҫламӗш шкулта вӗренме тивӗҫлӗ ачасем 15-рен кая мар пулсан, ҫӗнӗ шкулсем уҫнӑ; ҫапла, сӑмахран, Комсомольски районӗнчи Ахметьево ялӗнче, Йӗпреҫ районӗнчи «Канаш» колхозра, Советски районӗнчи Анат-Сӑнар ялӗнче тата ытти ҫӗрте те шкулсем уҫнӑ.

Шкулсен хисепӗ пире всеобуч законне ӑнӑҫлӑнах пурнӑҫа кӗртме май парать, ку енӗпе ҫине тӑрса ӗҫлени кӑна кирлӗ.

Шкул ҫурчӗсем чылай ҫӗрте кивелсе кайнӑ, вӗсене тӗппӗренех юсамалла. Кӑҫалхи ҫул, ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленнӗ май, республикӑра пирӗн 904 шкул юсамалла пулнӑ. Октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 884 шкул ҫуртне юсанӑ. Шкулсене юсас ӗҫ Етӗрне, Ҫӗрпӳ, Ҫӗмӗрле, Чкаловски районсенче уйрӑмах начар пулса пычӗ. Ку тӗлӗшпе Елчӗк, Комсомольски, Вӑрмар, Ишлей районӗсем ыттисенчен лайӑхрах ӗҫленине палӑртмалла.

Шкул ҫурчӗсене хӗле хатӗрлесе ҫитерес тӗлӗшпе учительсемпе вӗренекенсем тата ачасен ашшӗ-амӑшӗсем чылай ӗҫсем турӗҫ. Сӑмахран, Ҫӗрпӳ районӗнчи Топнер туллимар вӑтам шкулӗ (директорӗ Альбатрос), Канашри 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкул (директорӗ Иванова), Куславкка районӗнчи Варасӑр туллимар вӑтам шкулӗ (директорӗ Порфирьев) тата ытти нумай шкулсем хӑйсен вӑйӗсемпех шкул ҫурчӗсене хӗле тӗплӗн хатӗрлесе ҫитерчӗҫ.

Шкулшӑн Чӑваш АССР Верховный Совет депутачӗ Григорьева юлташ тимлӗн тӑрӑшнине палӑртса хӑварас пулать. Вӑл хӑй директор пулса тӑракан Матьшӳ (Шӑхасан р.) туллимар вӑтам шкулӗнче, йывӑр условисенчех, классем валли ҫӗнӗ ҫуртсем тутарттарнӑ.

Шкул ҫурчӗсем государствӑн темиҫе ҫӗр миллион тенкӗ тӑракан харпӑрлӑхӗ пулса тӑраҫҫӗ. Анчах шкул фончӗ ҫине шкул директорӗсемпе заведующийӗсем пур ҫӗрте те мар-ха кирлӗ пек ҫаваранса пӑхаҫҫӗ, вырӑнти советсем вара ун ҫине тепӗр чухне пачах та ҫаварӑнса пӑхмаҫҫӗ.

Шкул ҫурчӗсене хуҫасӑрла тыткаланине хирӗҫ ҫине тӑрса кӗрешмелле, вӗсене таса та лайӑх, типтерлӗ те сыхӑлӑхлӑ тытса усрама пӗтӗм общественноҫа мобилизацилес пулать.

Всеобуч законне пурнӑҫа кӗртес ӗҫе учительсен кадрӗсем татса параҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче учителӗн ӗҫӗ, унӑн пӗлӳлӗхӗ, вӑл вӗрентӳпе воспитани ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек йӗркелеме пӗлни уйрӑмах паха пулса тӑрать.

Ҫавна шута илсе, эпир республикӑри шкулсене лайӑх вӗренсе хатӗрленнӗ, всеобуч ӗҫне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме пултаракан учительсем тупса пама тӑрӑшрӑмӑр. Учительсемпе ҫутӗҫ органӗсенчи работниксен кадрӗсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче чылай улшӑнчӗҫ. Учительсенчен чи лайӑххисем фронта кайрӗҫ, вӗсен вырӑнне ҫамрӑк учительсем тӑчӗҫ. Ҫавна пула пуҫламӗш шкулсенчи учительсенчен пӗр пайне туллимар вӑтам шкулсене тата вӑтам шкулсене куҫарма лекрӗ. Ҫакӑ вӑл, паллах, кадрсем тӗлӗшпе тухса тӑнӑ йывӑрлӑха ҫӑмӑллатаймарӗ.

Республикӑри шкулсенчи учительсен составӗ ҫакӑн пек: пӗтӗмпе пирӗн 6.201 учитель, вӗсенчен аслӑ шкул пӗтернисем — 662 ҫын, аслӑ шкул пӗтерейменнисем — 737 ҫын, вӑтам шкул пӗтернисем—4.614 ҫын, вӑтам шкул пӗтерейменнисем — 188 ҫын.

Пӗтӗм учительсенчен ятарласа учитель пулма вӗренсе тухман ҫынсем: 1-мӗшпе 4-мӗш классенче — 1.150 ҫын, 5-мӗшпе 7-мӗш классенче — 1.485 ҫын, 8-мӗшпе 10-мӗш классенче — 277 ҫын.

Ятарласа учитель пулма вӗренсе тухман учительсене эпир заочнӑй йӗркепе вӗрентме тӑрӑшатпӑр, анчах халлӗхе вӗренӗве ҫителӗксӗр явӑҫтарнӑ, ку енӗпе нумай вӑй хурса ӗҫлеме лекет.

Чылай учительсем урӑх учрежденисенче хӑйсен специальноҫӗсемпе мар ӗҫлеҫҫӗ. Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ тӗле ҫавӑн пеккисене 326 ҫынна шута илнӗ, вӗсенчен 152 ҫын суйласа лартнӑ вырӑнсенче ӗҫлеҫҫӗ, ыттисене вара 174 ҫынна пӗр сӑмахсӑрах учитель ӗҫне куҫармалла. Вӗсенчен паянлӑха учитель ӗҫне 103 ҫынна куҫарнӑ. Хӑшпӗр районсенче ку тӗлӗшпе правительство кӑтартӑвӗсене питех те вӑрахӑн пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

Вӑрҫӑн йывӑр условийӗсенче те партипе правительство учительшӗн тимлӗн тӑрӑшаҫҫӗ. 1943 ҫулхи августӑн 11-мӗшӗнче СССР Совнаркомӗпе ЦК ВКП(б) учительсен ӗҫ укҫине ӳстересси ҫинчен постановлени йышӑнчӗҫ. Ҫавӑн пекех учительсене снабжени парса тӑрас тӗлӗшпе те ӗҫе чылай лайӑхлатнӑ. Ҫаксем вӗсем пурте халӑх учителӗшӗн пирӗн государство сталинла тӑрӑшнине кӑтартса параҫҫӗ.

Анчах хӑшпӗр вырӑнсенче партипе правительствӑн кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ-ха, учителӗн ыйтӑвӗсемпе нушисем ҫине чунсӑррӑн пӑхаҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе Тӑвай районӗ уйрӑмах палӑрса тӑрать. Кунта учительсене снабжени памалли йӗркесене пӑсаҫҫӗ. Сӑмахран, районри учительсене пӗр вӑхӑтлӑха пайок парас ӗҫе пачах та тытӑнман. Ҫавӑн пекех ку ӗҫе Красноармейски, Ҫӗрпӳ, Элӗк районӗсенче начар йӗркеленӗ.

Учительсен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатса пынипе пӗрлех, пирӗн вӗсен ӗҫри квалификацине, идейӑллӑ политикӑллӑ виҫине ӳстерес тӗлӗшпе те ҫине тӑрса ӗҫлемелле, учительсем хушшинчи методикӑллӑ ӗҫе, политикӑллӑ вӗренӗве тӗпренех лайӑхлатмалла.

Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци 26 ҫул тултарнӑ тӗле пирӗн республикӑри ачасенчен вӗренӗве пӗтӗмпе 96,1 процент явӑҫтарнӑ. Пуҫламӗш вӗренӳ енӗпе илсен, ачасене шкула 98,3 процент явӑҫтарнӑ.

Анчах вӑрҫӑн малтанхи икӗ ҫулӗнче шкул тулашӗнче юлнӑ ачасен хисепӗ чылай пысӑк пулнӑ. Ачасене пурне те вӗренӗве явӑҫтарманни е ачасем вӗренме пӑрахни Наркомпроспа ҫутӗҫ отделӗсем япӑх ӗҫленинчен килнӗ. Вӗсем чылай ҫӗрте хӑйсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек урӑхлатса ҫӗнетмен. Ҫавӑн пекех хӑшпӗр ялсовечӗсемпе райисполкомсем те шкулсене ҫителӗксӗр пулӑшса пынине, вӗсем шкулсен ӗҫне кулленех контроллесе тӑманнине те палӑртмалла.

Райисполкомсемпе ялсовечӗсем тата ҫутӗҫ отделӗсем кирлӗ пек ӗҫленӗ ҫӗрте всеобуч законӗ ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗрсе пырать. Сӑмахран, Вӑрмар районӗнче иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче всеобуч планне 98,8 процент, Советски районра 96,8 процент пурнӑҫланӑ. Елчӗк районӗнчи 20 пуҫламӗш шкултан 17 шкулта ачасене пурне те вӗренӗве явӑҫтарнӑ.

Пирӗн республикӑра всеобуч законне ҫулран ҫулах пурнӑҫа кӗртсе пыракан шкулсем сахал мар, сӑмахран: Ишлей районӗнчи Шетмӗпуҫ туллимар вӑтам шкулӗ, Сӗнтӗр районӗнчи Шупуҫ пуҫламӗш шкулӗ, Елчӗк районӗнчи Шаймурзино пуҫламӗш шкулӗ тата ыттисем те.

Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче ачасене пурне те вӗренӗве явӑҫтарас тӗлӗшпе чылай мерӑсем йышӑннӑ. Всеобуч пирки халӑха ӑнлантарса панӑ. Ачасене материальнӑй пулӑшу чылай панӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, вӗренекенсене атӑ-пушмаксемпе ҫӑматӑсем 5.663 мӑшӑр, 262 пальто, 2.400 кӗпе, хӗрачасем валли 692 юбкӑпа платье, 377 мӑшӑр кӗпе йӗм, 11.250 метр мануфактура панӑ. Колхозсем шкулсенче вӗри апат хатӗрлеме темиҫе ҫӗршер пӑт тырӑпа пахча-ҫимӗҫсем панӑ.

Чылай ҫӗрте ачасене пурне те вӗренӗве явӑҫтарас тӗлӗшпе шкулсене колхозсемпе предприятисем, пӗтӗм общественность пулӑшаҫҫӗ.

Ачасемшӗн тимлӗн тӑрӑшман ҫӗрте вара всеобуч законӗ япӑх пурнӑҫа кӗрсе пырать. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче Кувакино районӗ уйрӑмах япӑх ӗҫлерӗ. Унта шкула ҫӳреме тивӗҫлӗ ачасене 68 процент кӑна, Шӑмӑршӑ районӗнче 65 процент кӑна вӗренӗве явӑҫтарнӑ. Пӑрачкав районӗнчи пӗр Устиново вӑтам шкулӗнче кӑна 230 ачаран 105 ача шкул тулашӗнче юлнӑ.

Кӑҫалхи ҫул пирӗн республикӑра 536 шкул ачасене пурне те пуҫламӗш шкула вӗренӗве явӑҫтарнӑ. Елчӗк, Ҫӗрпӳ, Элӗк, Хӗрлӗ Чутай, Сӗнтӗр районӗсенчи шкулсем тата Канаш хулинчи шкулсем ачасене пуҫламӗш шкулта вӗренме пурне те явӑҫтарнӑ. Вӗсем патне Комсомольски, Ишлей, Первомайски, Вӑрмар, Вӑрнар, Октябрьски, Шӑхасан районӗсем ҫывхарса пыраҫҫӗ. Ҫӗмӗрле хулинче ачасене пуҫламӗш шкула 99.6 процент, Шупашкар хулинче—98,8 процент явӑҫтарнӑ.

Хӑшпӗр районсем ачасене вӗренӗве явӑҫтармалли плана аслӑ классем енӗпе те пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех пурнӑҫа кӗртнӗ, сӑмахран, Первомайски, Элӗк, Комсомольски, Шупашкар, Октябрьски районсем тата Шупашкарпа Ҫӗмӗрле хулисем. Канаш хулинче ачасене 10 ҫул вӗренмелли шкулсене те пурне те явӑҫтарнӑ.

Анчах республикӑри хӑшпӗр районсем всеобуч планне пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе халӗ те юлса пыраҫҫӗ-ха. Сӑмахран, Пӑрачкав районӗнче 281 ачана, Шӑмӑршӑ районӗнче 131 ачана, Сӗнтӗрвӑрри районӗнче 161 ачана, Улатӑр районӗнче 144 ачана, Етӗрне районӗнче 129 ачана пуҫламӗш шкулсене явӑҫтарман. Ҫавӑн пекех ку районсенче ачасене 7 ҫул вӗренме явӑҫтарас ӗҫ те япӑх пырать.

Пӗтӗмпе пирӗн республикӑра вӗренӗве 6249 ачана явӑҫтарман, вӗсенчен 1 727 ача пуҫламӗш шкула явӑҫтармасӑр юлнӑ.

Шкул ҫулӗнчи ачасене пурне те вӗренӗве явӑҫтарманни хӑшпӗр райисполкомсемпе ялсовечӗсем, ҫутӗҫ

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ М. П. Макаров юлташ тунă докладăн юлашки

органĕсенчи работниксемпе учительсем партипе правительство всеобуч çинчен кăларса панине кирлĕ пек ăнланса илменнинчен, шкулшăн тăрăшманнинчен, ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса ларнинчен килнĕ.

Шкулта вĕренме пăрахнă ачасенчен чылайăшĕсем, вăрçă пирки тухса тăнă сăлтавсене пула, фабрикăсемпе заводсене ĕçлеме кĕнĕ. Çав çамрăксем çинчен манни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Вĕсем вĕренме ĕмĕтленеççĕ. Совет правительстви кăçалхи çул предприятисенче ĕçлекен çамрăксем валли вăтам шкулсем организацилеме ятарласа решени йышăнчĕ. Çав решени тăрăх республикăри хуласемпе рабочи поселоксенче эпир 9 шкул организацилерĕмĕр. Вĕсенче хальхи вăхăтра предприятисенчи çамрăксем 1.350 çын вĕренеççĕ. Çамрăксен вĕренес ĕмĕчĕ пысăк. Вĕсене пирĕн пур майсемпе те пулăшмалла, вĕренес текенсене пурне те вĕренĕве явăçтармалла.

Çакăнпа пĕрлех халĕ пирĕн умра хут пĕлмен тата хут сахал пĕлекен çитĕннĕ çамрăксене ялсенче пуçламĕш шкул чухлĕ вĕрентессине организацилес задача тăрать.

Ачасене вĕренĕве явăçтарни — всеобучăн пуçламĕшĕ кăна-ха. Пирĕн ачасем вĕренме пăрахассинчен хытă сыхланмалла. Çавăнпа та кашни шкултах вĕренме йĕркеллĕ условисем туса парассишĕн уйрăмах çине тăрса тăрăшмалла. Ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче ăнлантарулла ĕçе тимлĕн туса пымалла, фронтовиксен ачисене, тăлăх ачасене материальнăй пулăшу памалла, шкулсенче вĕри апатсем пĕçерессине тата буфетсем организацилемелле, шкулсем çумĕнче интернатсем уçмалла, шкултан аякра пурăнакан ачасене хĕллехи вăхăтсенче лашапа илсе çÿремелле тăвас пулать. Выранти советсен шкул ĕçне куллен тĕрĕслесе, пулăшса тămалла, шкула пулăшнă çĕре пĕтĕм халăха явăçтармалла. Шкулсенче чир-чĕрсем сарăлассинчен сыхланмалла, санитарипе тасалăх йĕркисене çирĕп тытса пымалла. Шкулсене хĕл валли вутă çителĕклĕ таран хатĕрлесе парас пулать.

Шкулсем çумĕнче хăйсен продовольстви базисене тăвас шутпа, правительство кашни шкула çĕр участокĕ пама йышăнчĕ. Çак ĕç çине кирлĕ пек пăхнă çĕрте фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен ачисене пысăк пулăшу параççĕ.

1943 çулта республикăри шкулсем 1.415 гектар çĕр акса хăварнă. Чылай шкулсем шкул çумĕнчи участоксем çинчен пахча çимĕçсем пухса илнĕ. Самахран, Первомайски районри Палапуç-Пашьел [illegible] шкул ачисем хăйсен участокĕ çинчен 120 пăт тулă, 80 пăт вир пухса илнĕ.

[illegible] колхозсем всеобуч фондне хăйсен доходĕсенчен сахал мар тыр-пул хываççĕ. Самахран, Шупашкар районĕнчи Тохмеево колхозĕ шкула вĕри апат тума 10 центнер выраш, 20 центнер çĕрулми уйăрса панă. Çавăн пекех Çĕрпÿ районĕнчи Лĕпĕр ялсоветĕнчи колхозниксем [illegible] халăх хушшинче ачасем валли укçа-тенкĕпе япаласем пухса [illegible]. Çакă вăл шкулсене нумай пулăшу парать.

Çакăнпа пĕрлех всеобуч фондне [illegible] çулсерен правительство та пысăк пулăшу парать.

Вăрçа пула тăлăха юлнă ачасене пирĕн уйрăмах тимлĕн пулăшмалла. Ачасене хăшпĕр чухне çутĕç, сывлăха сыхлас тата социальнăй обеспечени органĕсем, выранти советсем çине [illegible] тимсĕр пăхаççĕ. Тăлăха юлнă ачасене вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçлекен районти комиссисен ĕçне [illegible] лайăхлатмалла.

Çапла ĕнтĕ [illegible] ачасене пурне те правительство панă [illegible] пĕтĕм [illegible] тĕрĕс [illegible] ачасемпе, фронтовиксен, эвакуаци [illegible] тăлăха юлнă ачасемпе [illegible] пулса [illegible].

тăрăшни пирĕн всеобуч законне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулăшĕ. Шкулшăн партипе совет органĕсем, çутĕç органĕсем, пĕтĕм общественность тимлĕн тăрăшсан, эпир шкул çулĕнчи ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарăпăр, ачасем, хăйсемшĕн тăрăшнине кура, вĕренме пăрахмĕç.

Кăçалхи вĕрентÿпе воспитани ĕçне пăхса тухсан, тăван тата вырăс чĕлхисене, математикăпа историе тата çар дисциплинисене вĕрентес ĕçе уйрăмах вăйлатма кирли палăрать.

Çавăн пекех ачасене шкул тата класс тулашĕнче воспитани парас ĕçе та лайăхлатмалла. Кунта чи малтан ачасене çар ĕçне вĕрентесси çине, физкультура ĕçĕ çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Вĕренÿ ĕçĕнчи çитменлĕхсем чылай чухне учебниксемпе çырмалли хатĕрсем çителĕксĕр пулнинчен килеççĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, учебниксем тĕлĕшпе йывăрлăха пĕтерес шутпа, кивĕ учебниксем 335 пин тенкĕлĕх илсе сутма кăтартса пачĕ. Анчах çакă вăл халлĕхе çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать. Вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле шкулта кирлĕ япаласен фондне тунă. Унта чылай япаласем кĕреççĕ. Чăн та, вĕренекенсем ыйтнисене тивĕçтерме çакă вăл çителĕксĕр пулин те, учебниксемпе вĕренÿ хатĕрĕсене типтерлĕ тыткаласан эпир йывăрлăхран тухма пултаратпăр.

Çĕршыври патриотла пысăк çĕкленÿ, шкулсенче çар ĕçне вĕрентме тытăнни, ачасем общество тата производство ĕçĕсене хутшăнса ĕçлени пирĕн çамрăк ăрăва паха хăнăху парать, çамрăксене пăсăлса каяссинчен сыхланма пулăшать. Анчах çапах та ачасем хушшинче шкул йĕркисене пăснисем, учителе хисеплеменнисем палăраççĕ-ха.

РСФСР правительстви «Вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли правилăсене» çирĕплетрĕ, çакă вăл шкулти вĕрентÿпе воспитани ĕçне лайăхлатма, ачасен дисциплинине çирĕплетме пысăк пулăшу парать.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче шкул вĕренекен çамрăксене общество усăллă ĕçе, оборона ĕçне хутшăнма, фронтовиксен çемьисене пулăшма организацилекен центр пулса тăчĕ. Учительсем, пионерсемпе шкул ачисем колхозсемпе совхозсене ялхуçалăх ĕçĕсене ирттерне çĕрте пысăк пулăшу пачĕç. Учительсемпе вĕренекенсем фронта пулăшнă çĕре активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем танксемпе самолетсем тума укçа-тенкĕ чылай пухрĕç, фронтовиксем патне парнесем ярса тăраççĕ. Çак ĕçсем пурте ачасене тĕрĕс воспитани парас тĕлĕшпе пулăшаççĕ.

Депутат юлташсем! Халăха çутта кăларас ĕçре, Наркомпросра, унăн выранти органĕсем ĕçĕнче [illegible] çитменлĕхсем пур-ха. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем [illegible] çитменлĕхĕсене пĕтерсе [illegible].

[illegible]

Шкулсем, ăна юсавлă та культурăллă [illegible] шкул валли [illegible].

[illegible] Партипе правительство [illegible] шкула [illegible] чыслăн пурнăçа кĕртер.

Сталин юлташăн докладне 5 миллион экземпляр пичетлесе кăларнă

Политика литературин Государство издательстви Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕн И. В. Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 26 çул тултарнă ячĕпе Ĕççыннисен депутачĕсен Мускав Совечĕн Мускав хулинчи партипе общество организацийĕсемпе пĕрле пулнă ларăвĕнче 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладне тата Верховнăй Главнокомандующин 1943 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнчи 309-мĕш приказне уйрăм брошюра туса пичетлесе кăларнă.

Брошюра пуçламăшĕнче Совет Союзĕн Маршалĕн Сталин юлташăн сăнне пичетленĕ. Брошюра пĕтĕмпе 5 миллион экземпляр пичетленĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Житомир облаçĕнчи район центрĕсене РАДОМЫШЛЬ хулине, БРУСИЛОВ тата КОРНИН ятлă ялсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра—УНИН, ХАНАЕВ, КУХАРЫ, ЗАРУДЬЕ, МАКАЛЕВИЧИ, ВЕПРИН, МЕЖИРИЧКА, ВЫШЕВИЧИ, ВЕЛИКАЯ РАЧА, КИЧКИРЫ, ГЛИНИЦА, БЕРЕЗОВКА, МИНЕЙКА, КОЗИЕВКА, ЦАРЕВКА, ВОЙТАШИЕВКА, КОЧЕРОВО, ОЗЕРЯНЫ, ВЕЛИКИЕ ГОЛЯКИ, СУЩАНКА, БЕЛКИ, МОХНАЧКА ятлă пысăк ялсем тата ТЕТЕРЕВ, ЧЕРНЯВКА ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем малтанхи районсенчех плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă, тăшманăн тĕреклетнĕ паха пункчĕсене чылайĕшне тытса илсе, хăйсен позицийĕсене самаях лайăхлатнă.

РЕЧИЦĂРАН кăнтăртарахра пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă; тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, унăн вăйлă çирĕплетнĕ НАДВИН, ГОНЧАРОВ ПОДЕЛ, ГРОМЫКИ, ЯСТРЕБКА, НОВАЯ КУЗНЕЧНАЯ, РУЧАЕВКА ятлă пункчĕсене тытса илнĕ.

НЕВЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехри тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тата унăн контратакисене сире-сире ярса, тĕллен-тĕллĕн çапăçнă, темиçе ял тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 87 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 30 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Советсен çÿмаллан куçса çÿрекен чаçĕсем çапăçса Тетерев шывĕ урла каçнă та Житомир облаçĕнчи район центрне—Радомышль хулине йышăнса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн танкĕсемпе тата мотопехотипе хаяррăн çапăçнă. Нимĕçсен 42 танкне пĕтерсе тăкнă, 800 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, пирĕн боецсем малалла кайнă, Житомир облаçĕнчи Брусилов Корнин ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти чылай пунктсене йышанса илнĕ. Пирĕн танкистсем тăшман йышăнса тăнă пĕр яла çав тери хăвăрт вăркăнса кĕрсе кайнă та нимĕçсен танковăй дивизийĕн штабне аркатса тăкнă. Штаб докуменчĕсене тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Керчь çурутравĕ çинче пирĕн çарсем плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă. Керчь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре совет боецĕсем тăшмантан вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ. Нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пĕр артиллери батарейине, минометсен 2 батарейине, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Керчь хулинчен кăнтăртарахра тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

* * *

Речицăран кăнтăртарахра, Днепр шывĕн сылтăм енче, пирĕн чаçсем артиллери персе хатĕрленĕ хыççăн тăшмана атакăланă та, вăл хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Нимĕçсем çав ялсене вăйлă çирĕплетнĕ пулнă, анчах та пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе пысăк çухату тÿсnĕ те каялла чакнă. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 2 000 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ. Артиллерин тата минометсен 12 батарейне пĕтерсе тăкнă, 5 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен 2 тупа персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вăл шутра 53 тупă, 13 миномет, 102 пулемет тата боеприпассен темиçе складĕ пур. Тыткăна чылай илнĕ.

* * *

Невель хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. Пĕр участокра нимĕç пехотин пысăк вăйĕсем тата танкĕсем, хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем пулăшнипе, совет чаçĕсем малалла куçса пынине чарма хăтланнă. Кун каçиччен пирĕн боецсем тăшманăн 12 контратакине сирсе янă, нимĕçсене пысăк çухату кÿнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 18 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен „Фердинанд“ йышши 4 туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче 28 тупă пур. Тепĕр районра пĕр соединени чаçĕсем çапăçса малалла куçнă, темиçе ял тытса илнĕ. Çав ялсемшĕн çапăçнă чухне гитлеровецсен 9 йывăр танкне персе çĕмĕрнĕ, нимĕç пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 19 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Финн заливĕнче Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем тăшманăн пĕр тральщикне тата 1000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен пĕр ялта вырнаçнă гарнизонне тапăннă. Тăшмана пур енчен те атакăласа, партизансем гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. 11 пулемет, миномет, пĕр радиостанци, 60 винтовка тата патронсем нумай тытса илнĕ. Калинин облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ икĕ эрне хушшинче нимĕçсен 8 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 8 паровоз тата çар хатĕрĕсем турттарса пынă 50 вагона çити çĕмĕрĕлсе кайнă.

* * *

Днепр шывĕн сылтăм енче нимĕçсен 24-мĕш танковăй дивизийĕнчи салтаксен пĕр ушкăнне тыткăна илнĕ. 26-мĕш моторизованнăй гренадерски полкăн мотострелковăй эскадронĕнчен тыткăна лекнĕ оберефрейтор Вилли Кулек çапла каласа кăтартнă: „24-мĕш танковăй дивизи нимĕçсен 6-мĕш армине кĕнĕ, ăна Сталинград патĕнче пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Çак çулхи çуркунне Францире çĕнĕ танковăй дивизи турĕç, номерне çав кивĕ номерах пачĕç. Çулла дивизие Италие, Болонья хулине илсе кайрĕç. Октябрĕн 10-мĕшĕнче дивизие пĕтĕмĕшпех поездсем çине лартрĕç те Россиана васкаса илсе килчĕç. Эпир çак маршрутпа килтĕмĕр: Болонья—Прага—Бреславль—Польша. Октябрĕн 20-мĕшĕнче Одессăна çитрĕмĕр. Одессăран дивизие Кировограда илсе кайрĕç. Кунтан вара фронт участокне ячĕç. Пире çакăн пек задача пачĕç: вырăссен çарĕсене татса илмелле те пĕтерсе тăкмалла, юлашкисене Днепр шывĕн леш енне хăваласа ямалла. Анчах пире малтанхи çапăçусемех йывăр хуйха ÿкерчĕç. Эпир питĕ пысăк çухату тÿсрĕмĕр, анчах та нимĕнле çитĕнÿ те тăваймарăмăр“.

* * *

Аялараx нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Павлово ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: „Хăйсем пуç пулса тăнă вăхăтра нимĕçсем пирĕн „Новая жизнь“ колхоза йăлтах çаратса пĕтерчĕç. Гитлеровецсем мĕнпур выльăхчĕрлĕхе, тырпула йăлтах туртса илчĕç, колхоз утарне çаратрĕç, ялхуçалăх инвентарьне салатса, çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакма пуçласан, нимĕçсем колхозниксен 40 пÿртне мĕнпур хуралтисемпе тата пĕтĕм пурлăхĕпе пĕрле йăлтах çунтарса ячĕç. Федосия Черненкова колхозницăна фашистла чуниленсем чĕррĕнех çунтарса ячĕç. Гитлеровецсем ялти пĕтĕм халăха нимĕçсен тылне хăваласа кайма хăтланчĕç. Хĕрлĕ Çар боецĕсем пырса çитсе, пире фашистла чуралăхран çăлса хăварчĕç“.

Акт çине алă пуснă: „Новая жизнь“ колхоз председателĕ Мария Жанжарова, колхозниксем—Сергей Петраков, Егор Жанжаров, Макар Жанжаров т ыт. те

Ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ ÿсемсемшĕн

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри пур колхозсенче те Сталин юлташăн докладне сÿтсе явас шутпа митингсем пулса иртрĕç.

Кушар ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе таракан колхозри колхозниксем халех çитес çуракине хатĕрленме, ялхуçалăх инвентарĕсене юсама тытăнма, выльăхсем валли ăшă витесем хатĕрлесе çитерме пулчĕç. Колхоз Октябрь уявĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тыррă парса татнă. Колхозниксем государство умĕнчи пур парăмсене те пурнăçланă.

«Янмурзино», «Красное Сормово», «Чăмыш» колхозсен членĕсем те çитес çулхи çуракине лайăх хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе кирлĕ мероприятисене тума тытăнчĕç.

С. ШАДИН.

Ют çĕршывсенчи политика деятелĕсем Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă ятпа янă саламсем

Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă ятпа Калинин юлташ патне çаксем саламлă телеграммăсем янă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ Рузвельт, Иран шахĕ Мохамед Реза Пехлеви, Турци республикин президенчĕ Исмет Иненю, Чехословаки президенчĕ Бенеш, Югослави корольĕ II Петр, Люксембург аслă герцогини Шарлотта, Куба республикин президенчĕ Ф. Батиста.

Сталин юлташ патне çаксем саламлă телеграммăсем янă: Турци премьер-министрĕ Сараджоглу, Францирен—де Голльпе Жиро, Бельги премьер-министрĕ Губерт Пьерло, Чехословаки правительствин премьер-министрĕ Ян Шрамек, Югослави эмигранчĕсен обществисен секретарĕ Силич.

Молотов юлташ патне çаксем саламлă телеграммăсем янă: Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, США-н государственнăй секретарĕ Хэлл, США-н государственнăй секретарĕн ĕçĕсене туса тăракан Стеттиниус, Югославин, Норвегин тата Турцин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем — Пурич, Трюгве Ли тата Менеменджиоглу, Франци ирĕке кăларас тĕлĕшпе кĕрешекен комитетăн ют çĕршыв ĕçĕсен комиссарĕ Массильи. (ТАСС)

Сталин юлташ патне янă саламсем

Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă май Сталин юлташ патне çаксем салам янă: Мускавпа пĕтĕм Русь патриархĕ Сергий, Совет Союзĕнчи православнăй çĕнелнĕ чиркÿсен первоиерархĕ Введенский, мусульмансен центральнăй духовнăй управленийĕн муфтийĕ, çĕнелнĕ православнăй чиркĕвĕн митрополичĕ Филарет Ященко хăйĕн духовенствипе пĕрле тата епископ Дмитрий Градусов янă. (ТАСС)

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнче каялла чакакан тăшман пурне те ишсе хăварма тăрăшать. Çапах та акăлчансен çарĕсем фронт талкăшĕпех малалла куçнă. Çурçĕрти участокра союзниксен çарĕсем Сангро шывĕ патĕнчи лайăх позицисем патне пырса çитнĕ. Вăйлă çумăрсем американецсен 5-мĕш армине çапăçма кансĕрлеççĕ. Çапах та 5-мĕш арми чаçĕсем малалла куçнă, унччен йышăннă позицисене лайăхлатнă.

Ноябрĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем Дураццо гаванне (Албания) атакăланă. Бомбăсем склада тÿрремĕнех пырса тивнипе вăйлă взрыв пулнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче тăшман вăйлăн хирĕç тăнă, союзниксен çарĕсене хирĕç темиçе хутчен те пĕчĕк контратакăсем тунă. Çав контратакăсене пурне те сирсе янă. Çĕнĕрен паха çÿллĕ темиçе вырăна йышăнса илнĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕ Каровилли хулине тытса илнĕ. 8-мĕш армин малта пыракан чаçĕсем Сангро шывĕ патне çитнĕ. Кăнтăртарахра та кăштах малалла куçнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: союзниксен авиацийĕ Дураццо портне (Албания) тата Сплит портне (Югослави) атакăланă.

Америка авиацийĕ Турин çине бомбăсем пăрахнă

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка самолечĕсем Туринри (Çурçĕр Итали) шарикоподшипниксем тăвакан завод çине бомбăсем пăрахнă.

Австрири хумханусем

ВЕНА ХАЛĂХĔПЕ СС ÇАРĔСЕМ ХУШШИНЧИ ТЫТĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стокгольмри специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, ноябрĕн 6-мĕшĕнче Венăра Гитлера хирĕç массăллă демонстраци пулса иртнĕ. Вырăнти халăхпа СС çарĕсем хушшинче хĕçпăшаллă тытăçусем пулса иртнĕ. Швецири «Дагенс нюхетер» ятлă хаçатăн Цюрихри корреспонденчĕ çав тытăçу вăхăтĕнче темиçе çĕр çынна аманни çинчен тата вилнĕ çынсене нумай санитарнăй машинăсемпе турттарни çинчен пĕлтерет. Вилнисен хисепне пĕлме май килмен, мĕншĕн тесен тытăçу пулнă района никама та кĕртмен. Çав кун хула çурчĕсем тăррине Австрин наци ялавĕсем вĕлкĕшнĕ, çуртсен стенисем çине Германие хирĕçле сăмахсем çыра-çыра хунă. «Сывă пултăр ирĕклĕ Австрия» текен плаката питĕ нумай вырăнсене çыпăçтарса тухнă. Тироль тата Штири тăвĕсем çинче халăх хăй демонстрантсемпе пĕр шухăшлă пулнине кăвайтсем чĕртсе паллă тунă.

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин «Афтонбладет» ятлă хаçачĕн Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Австрире те, Германия тытса илнĕ ытти çĕршывсенчи пекех, администраципе хуçалăх ĕçĕнчи чи кирлĕ вырăнсене Германирен килнĕ çынсем кĕрсе ларнă. Австрири халăх нимĕçсене курайманасть. Влаçсем австриецсене нумайăшĕн тытса хупаççĕ е асаплантарса вĕлереççĕ. Австрире халь 30 пин эсэсовец пурăнать.

Нью-Йоркра Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăх конгресĕ пулса иртнĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕпе 8-мĕшĕнче Нью-Йоркра Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăх конгресĕн сессийĕ пулса иртнĕ. Çав сессире профсоюзсенчен, наукăллă тата ытти организацисенчен 800 делегат пулнă. Сессире пулнисем Америкăн аслă союзникне—Совет Союзне, Сталин юлташа, Совет государствин ытти руководителĕсене, совет халăхне тата Хĕрлĕ Çара саламланă. Делегатсем ют çĕршыв ĕçĕсен вице министрĕн Мускавра пулса иртнĕ конференцийĕн декларацине ырланă тата „Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăхăн наци совечĕн“ ĕçне вăйлатма сăмах панă. „СССР тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерес куна çывхартрĕ тата мире юрататкан çĕршывсен никам аркатайми союзне тума пулăшрĕ“, тенĕ конгресăн резолюцийĕнче.

Конгресс ноябрĕн 8-мĕшĕнче каçхине Медисон-сквер-Карденра пулнă митингпа вĕçленнĕ. Çав митингра США-н çар производстви тĕлĕшпе ĕçлекен управленин председателĕ Нельсон, шалти ĕçсен министрĕ Икес, сенатор Пеппер, Совет Союзĕнче посол пулнă Девис, АФТ председателĕ Грин тата ыттисем те сăмах тухса каланă. Конгреса США вице-президенчĕ Уоллэс, государственнăй секретарĕн заместителĕ Стеттиниус, представительсен палатин председателĕ Рейберн, негрсен Университечĕн ректорĕ Джонсон тата США-ри ытти паллă деятельсем, çавăн пекех Куба президенчĕ Батиста салам янă.

ИДЕН АНГЛИЕ ÇИТНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Антони Иден Англие таврăннă.

Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă ятпа тунă доклачĕпе приказне ăнлантарнă май докладсемпе калаçусем ирттермелли

ТЕМĂСЕМ

1. Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ — Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн тăшмана çапса аркатассишĕн кĕрешмелли боевой программи.
2. Вăрçă ĕçĕнчи татăклă улшăнусулталăкĕ.
3. Фронта пĕтĕм халăх пулăшни.
4. Рабочи класăн фронта пулăшас ĕçри паттăрлăхĕ.
5. Колхозлă хресченсен Отечественнăй вăрçăри патриотизмĕ.
6. Пирĕн транспортăн фронта пулăшас тĕлĕшри вырăнĕ.
7. Совет интеллигенцийĕн Отечественнăй вăрçă условийĕсенчи пархатарлă ĕçĕ.
8. Совет Союз вăйĕсен çăлкуçĕсем.
9. Тăшманран ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăхпа культурăна юсаса йĕркелесси — обществăллă пысăк задача.
10. Гитлера хирĕçле коалици тĕрекленни.
11. Фашистла блок арканни.
12. Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн фашистла захватчиксене çапса аркатас тĕлĕшри задачисем.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1868 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б 53 84 п л.